**Ылтăнпа кĕмĕл**

– Кам çуралнă, ылтăн-и?
– Кам çуралнă, кĕмĕл-и?
– Ашшĕ-амăш телейне,
Ваттисен савăнăçне
Мĕтри Иван йăхĕнче
Ылтăн-ывăл, кĕмĕл-хĕр,
Йĕкĕреш çуралнă.
Çак хыпара илтнĕ-илтмен
Якку киле чуптарнă.
– Атте, эпĕ ылтăн-им,
Маня йăмăк кĕмĕл-им?
– Анне – тăван кил ăшши,
Атте – пурнăç тĕрекĕ,
Ачи-пĕчи – ырлăх-пурлăх:
Ылтăнĕпе кĕмĕлĕ.

*Асамат, С. Ылтăнпа кĕмĕл : [сăвă] / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 407.*